23-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 МАРТ 11 ЮНКУН 59(6084) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Комсомола практикăллă ĕçре куллен ертсе пымалла

Комсомол — коммунистсен партийĕн резервĕ, унăн чи çывăх помощникĕ. Ленинла-сталинла комсомол пур вăхăтра та, пур çĕрте те партипе пĕрле пулнă, унăн кăтартăвĕсем тăрăх ĕçленĕ, кĕрешнĕ.

Большевикла парти ертсе пынипе комсомол граждан вăрçин фрончĕсенче паттăррăн кĕрешнĕ, сталинла пятилеткăсен аслă сооруженийĕсене тăвассишĕн ĕçленĕ. Вăрçă фрончĕсемпе ĕç фронтĕнче паттăрлăх, хăюлăх кăтартса кĕрешнĕ ленинла-сталинла комсомолăн историйĕ большевикла партин историйĕпе таччăн çыхăнса тăрать.

Халĕ, совет халăхĕ нимĕçсен фашистла бандисене хирĕç отечественнăй аслă вăрçă туса пынă хаяр кунсенче, совет çамрăкĕсем тата вĕсен малта пыракан отрячĕ ленинла-сталинла комсомол вăрçă фрончĕсенче паттăррăн кĕрешеççĕ. Тылра — ĕç фронтĕнче вĕсем ĕçе пуçарулăхпа çĕнĕ хавхаланупа кӳрекенсем, нихăçанхинчен пысăк çитĕнӳсем туса ĕçлекенсем пулса тăраççĕ. Чăваш республикинчи комсомол организацийĕн йышĕнчен 22 процента яхăн Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕç, вĕсем çĕршыври çамрăксемпе пĕрле тăрса, фашистла вăрăттурахсене хирĕç кĕрешеççĕ.

Пирĕн çамрăк çарăн вăй-хăвачĕ, паттăрлăхĕ иксĕлми пысăк. Çĕршер пин çулăмлă патриотсем вăрçă фрончĕсенче халиччен этемлĕх курман геройлăх, хăюлăх кăтартса çапăçаççĕ. Ленинла-сталинла комсомол ретĕнче вĕренсе ӳснĕ геройсен ĕçне пĕтĕм совет халăхĕ ĕмĕр-ĕмĕр асра тытса пурăнĕ. Исрафуил Мамедов, Курбан-Дурды, Александр Чекалин, Зоя Космодемьянская, Николай Бочаров, Илья Кузин тата ытти нумай çамрăксен геройла ĕçĕсем пирĕн çамрăксене халăхăн ирĕкĕшĕн, хамăрăн телейшĕн, çĕнтерӳ тăвассишĕн вилĕмрен хăрамасăр, паттăррăн кĕрешме хавхалантараççĕ. Çĕршыври ытти пур çамрăксемпе пĕрлех пирĕн Хĕрлĕ Çар ретĕнче комсомолăн Чăваш республикинчи организацийĕн воспитанникĕсем те хăюлăх, паттăрлăх кăтартса кĕрешеççĕ. Сергей Евланников, Николай Маренин, Михаил Кузнецов, Файзулла Крымов, Яков Игнатьев юлташсем вăрçă фрончĕсенче нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешсе партипе правительствăн наградине илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Тăван çĕршыв кунçулĕ пирки çапăçу хирĕнче ыйту татас кунсенче пирĕн комсомол, фабрикăсемпе заводсенче, колхозсен уйхирĕсемпе МТС-сенче хăйĕн пĕтĕм вăйне фронта, çĕршыва пулăшнă çĕре хурса, хастаррăн ĕçлет. Вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсен-двухсотниксен шучĕ ӳссех пырать. Пирĕн республикăра вĕсен хисепĕ паянхи куна темиçе çĕршер çынна çитрĕ.

Çамрăк ăрăва, ленинла-сталинла комсомола ĕçре куллен вĕрентсе, ертсе пырасси коммунистсен уставпа пăхнă обязанноçĕ пулса тăрать. Çак ĕçе халĕ уйрăмах тимлĕн туса пыма кирли ăнлантарса памасăрах курăнса тăрать. Вăрçă фрончĕсенче хаяр çапăçусем пы- [illegible] ВКП(б) райкомĕсем [illegible] комсомол организацийĕсене [illegible] политикăллă [illegible] производствăри активлăхне ӳстерес [illegible] Комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçре [illegible]

Ку тĕлĕшпе Чкаловски, Куславкка, Етĕрне районĕсенчи парторганизацисем самаях лайăх ĕçлени кăтартса памалла. Етĕрнери [illegible] парторганизацийĕ комсомол организацийĕн ĕçне тĕрĕслесе, вăхăтра пулăшу парса пырать. Кунта коммунистсем комсомолецсене [illegible] тăтăшах докладсем, лекцисем туса ирттереççĕ. Комсомолăн Етĕрне районĕнчи организацийĕ çар ĕçне [illegible] Çĕршер çамрăксем оборона значокĕсен нормисене пачĕç, çамрăксене [illegible] танксен истребителĕсене [illegible] Партин организацийĕсем [illegible]

зацийĕ ертсе пынипе районри комсомолецсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлеççĕ.

ВКП(б) Тăвай райкомĕ юлашки уйăхсенче комсомолăн районри организацийĕн ытăвĕсемпе ытларах интересленме пуçларĕ. Юлашки вăхăтра ВКП(б) райкомĕ хăйĕн бюровĕн ларăвĕнче комсомол организацийĕн хуçалăхĕ çинчен, организацире член укçи пухас ĕç мĕнле тăни çинчен сӳтсе яврĕ тата уйрăм парторганизацисем комсомол организацийĕсене мĕнле пулăшни çинчен отчетсем итлерĕ. Çапла тунипе ВЛКСМ Тăвай организацийĕ хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ.

Анчах та комсомол организацийĕсене куллен пулăшса, ертсе пырас ĕçе парторганизацисем пурте мар-ха кирлĕ пек туса пыраççĕ. Çакна уйрăмах партин колхозсенчи пуçламăш организацийĕсем пирки каламалла. Кĕçкей ялĕнче (Октябрьски район) партин пуçламăш организацийĕ кулленхи ĕçре ялти активпа çыхăнса пымасть. Ку ялта комсомол организацийĕ те япăх ĕçлет. Комсомол организацийĕн секретарĕ кунта — çамрăк комсомолец Кутаркин. Унăн пĕлӳлĕхĕ те, политикăллă туйăмĕ те çителĕксĕр, ăна пулăшмалла. Комсомолецсен пухăвĕсем кунта йĕркеллĕн пулмаççĕ, член укçине иртнĕ çулти сентябрь уйăхĕнчен вара пухман. Апла пулин те комсомол организацийĕн ĕçне чĕртсе ярас тесе парторганизаци нимĕн те туман. Парторганизацин секретарĕ В. Сергеев юлташ ялти çамрăксене хуçалăхпа политикăллă ĕçсене явăçтарма тăрăшмасть. Колхоз халĕ те авăн çапса пĕтермен, государство умĕнчи обязательствăсене татман, çуракине хатĕрленес ĕç те сӳрĕккĕн пырать.

ВЛКСМ райкомĕсене ертсе пырас ĕçе халĕ чылай çĕрте çĕнĕ çамрăк кадрсем хутшăнчĕç. Вĕсене ВКП(б) райкомĕсен ĕçре куллен вĕрентсе пымалла, массăсене ертсе пырас ĕçĕн опытне памалла. Çакна ĕнтĕ пурте ăнланаççĕ, апла пулин те ВКП(б) Йĕпреç райкомĕ çак ĕç çине сиелтен пăхать, комсомол райкомĕн ĕçĕпе интересленмест. Çавăн пекех ВКП(б) Улатăр, Шăмăршă, Кувакино райкомĕсем те юлашки вăхăтра комсомол райкомĕсен ĕçне ертсе пырассине начарлатрĕç. ВЛКСМ Шăмăршă райкомĕн секретарĕ Кузнецова юлташ нумай ыйтусене татса парас тĕлĕшпе, пĕлӳлĕх çитмен пирки, хăюсăр ĕçлет. ВЛКСМ райкомĕ районри комсомолецсене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе конкретнăй задани илнĕ. Çак задание пурнăçлас ĕçре вĕсен нумай çитменлĕхсем пулнă. Анчах ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕ ВЛКСМ райкомне пулăшман. Çапла вара райком комсомолецсене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе илнĕ задание кирлĕ пек пурнăçлайман.

ВКП(б) Кувакино райкомĕ комсомолецсемпе профсоюз членĕсен йĕлтĕрлĕ кросне ирттерес ĕçе йăлтах ВЛКСМ райкомĕ çине хунă. Çапла çак пысăк мероприятие ирттерес ĕçе кунта тивĕçлипе хак паман. Кроса мĕнпур те 998 çын çес хутшăннă.

Комсомол организацийĕсене государствăлла [illegible] Партин пуçламăш организацийĕсем [illegible] комсомол организацийĕсене [illegible]

Çулпуç Сталин юлташăн чаплă [illegible] комсомолецсемпе çамрăксен [illegible] çĕнтерӳ [illegible] мобилизацилемелле.

Çамрăксем колхоз производствинче

КАЛИНИНО. Сăкăтри Буденный ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе çамрăксем колхоз производствинче активлă хутшăнса ĕçлеççĕ. [illegible] Комсомолец А. Ананьев юлташ 8 лаша пăхать. Ананьев юлташ колхозри ытти çамрăксене те хăй пек ĕçлеме вĕрентет. [illegible] П. Прокопьев, В. Арсентьева, П. Павлов, Г. Воробьев, П. Башнеевский тата Матрена Григорьева юлташсем кашниех 7—9-шар лаша пăхма тытăнчĕç. Вĕсем пурте хăйсен лашисене суракине ăнăçлă ирттерме хатĕрлеççĕ.

Комсомолец Н. Евсеев колхозăн вăкăрĕсене пăхать. Алеша Михайлов ĕне фермине пăхать, П. Карпова ветфельдшер, комсомолец Ф. Леонтьев тимĕрçĕ пулма вĕренеççĕ. Ваня Краснов вăрман касас ĕçре активлă хутшăнать.

Колхоз производствинче тăрăшса ĕçленипе пĕрлех, комсомолецсем çар ĕçне те вĕренеççĕ, оборона значокĕсен нормисене параççĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

Оборона фондне 1560 тенкĕ хывнă

Тутарсăри Созойан Чăваш республикинчи Совет ĕçлекенсем [illegible] хывнă.

Ф. ТИМОФЕЕВ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

9. **Çĕмĕрле районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Мезяков**). Колхоз çуракине çителĕклĕ таран вăрлăх хатĕрлесе хунă. Сеялкăсене, плугсене, сӳресене, кӳлмелли хатĕрсене юсанă. Колхоз уя 2200 лав тислĕк кăларнă, 380 центнер минераллă удобренисем турттарса килнĕ, 180 центнер кĕл тата 53 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

10. **Çĕмĕрле районĕнчи «Искра» колхоз** (колхоз председателĕ **Н. Е. Кузьмин**). Колхоз мĕнпур çĕр лаптăкне акмалăх таса та паха вăрлăх хатĕрлесе хунă. Сеялкăсене, плугсене, сӳресене, кӳлмелли хатĕрсене юсанă. Колхоз уя 1.500 лав тислĕк тăкнă, 50 центнер кĕл пухса хатĕрленĕ.

11. **Вăрнар районĕнчи Сендимиркинчи «Гигант» колхоз** (колхоз председателĕ **Бардасов** юлташ). Колхоз тĕштырă, пахча-çимĕç вăрлăхĕсене тата пăрçа йышши вăрлăхсене хăйĕн мĕнпур çĕр лаптăкне акмалăх хатĕрлесе хунă. Вăрлăхсене пурне те тасатнă, сортланă. Ялхуçалăх машинисене, транспорт инвентарĕсене, кӳлмелли хатĕрсене юсанă. Колхоз 6.500 лав тислĕк, 80 центнер кĕл, 36 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ, фосфорит çăнăхне 150 центнер, сульфат аммоние 100 центнер туртарса килнĕ.

Çурхи акана хатĕрленес ĕçре уйрăмăнах **Е. Е. Ефремов, Р. С. Войнов, К. И. Чернышев** бригадисем лайăх ĕçленĕ.

12. **Вăрмар районĕнчи «Большевик» колхоз** (колхоз председателĕ **В. А. Алексеев** юлташ). Колхоз çуртырри культурисен вăрлăхĕсене хăйне кирлĕ таран хатĕрлесе хунă. Вăрлăхсене сортланă, пур енчен те акма юрăхлă тунă, вĕсене лайăх упраççĕ. Ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене юсанă. Колхоз уя 1.860 тонна тислĕк кăларнă, 140 центнер кĕл, 70 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

13. **Вăрмар районĕнчи Текеш ялсоветĕнчи «Красная Кубня» колхоз** (колхоз председателĕ **Ф. Сапаркин** юлташ). Колхоз тĕштырăпа кантăр вăрри вăрлăхне тата пăрçа йышши вăрлăхсене хăйне кирлĕ таран хатĕрлесе хунă. Вăрлăхсене сортланă, пур енчен те акма юрăхлă тунă. Ялхуçалăх машинисене, инвентарьсене, кӳлмелли хатĕрсене пурне те лайăх юсанă. Колхоз уя 1.450 лав тислĕк кăларнă, 36 центнер кĕл, 25 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ, 79 гектар çинче юр тытнă.

Çуракине хатĕрленес ĕçре уйрăмăнах **И. Волков** бригади лайăх ĕçленĕ. **Агафия Фоминапа Мария Гаврилова** вăрлăх сортлас ĕçĕн нормине яланах ытлашшипе тултарса пынă, вĕсем пĕр сменăра 25—30-шар центнер вăрлăх сортланă.

Пахча-çимĕç тăвас ĕçе массăллăн аталантарасси — государствăн питех те паха ĕçĕ

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн президиумĕ йышăннă постановлени

ВЦСПС секретариачĕ «Рабочисемпе служащисем хушшинче пахча-çимĕç тăвас ĕçе аталантарасси çинчен» йышăннă постановление вăтам машиностроенире ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн Мускав область комитечĕ тата электроламповăй заводăн профсоюз комитечĕ мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен ВЦСПС президиумĕ постановлени йышăннă. Çав постановленире çапла каланă:

Рабочисен пахчисене организацилесси çинчен вăтам машиностроенире ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн Мускав область комитечĕн председателĕн Самойлов юлташăн тата электроламповăй заводăн профсоюз комитечĕн председателĕн Калинкин юлташăн докладĕсене итленĕ хыççăн ВЦСПС президиумĕ çакна палăртма кирлĕ тесе шутлать: обкомпа завод комитечĕ йышăннă мерăсем рабочисен пахчисене организацилес, çĕрулми, купăста, помидор, сухан, кишĕр тата ытти пахча-çимĕçсем лартмалли çĕр лаптăкне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçе кирлĕ таран çапса яма май памарĕç.

ВЦСПС президиумĕ профсоюзăн мĕнпур организацийĕсене çакăн çинчен асăрхаттарать: çурхи уйхир ĕçĕсем пуçланас вăхăт инçе юлмарĕ, çуракине ирттерме организованно хатĕрленмелле тата ăна кĕске вăхăтрах туса ирттермелле.

Пахча-çимĕç лартса тăвас ĕçе массăллăн аталантарни рабочисемпе служащисем валли продовольстви çĕнĕ ресурсĕсене туса пыма май паракан государствăн питех те паха мероприятийĕ пулса тăрать.

ВЦСПС президиумĕ **çапла йышăнать:**

1. Профсоюзсен фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитечĕсене пахчасем валли çĕр участокĕсем илме шутлакан рабочисемпе служащисене çырса тухма тата кăçалхи мартăн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр пахчасем валли çĕр участокĕсем уйăрса çирĕплетес ĕçе туса çитерме хушас.

2. Пахчасем валли уйăрнă çĕр участокĕсем чылай çĕрте предприятисенчен аякра пулма пултарассине тата çав пахчасенче ĕçлеме турттăм вăйĕ кирлĕ пулассине шута илсе, рабочисемпе служащисем валли пахчасене пĕчченшерĕн уйăрса панипе пĕрлех, коллективлă пахчасем тăвассине те кирлĕ тесе йышăнас.

3. Профсоюз организацийĕсен пахчасене вăхăтра сухалама лашасăн рабочисемпе служащисене туртă тăвĕ тупса пулăшмалла, çакăн пек туса май çук çĕрте çĕр участокĕсене алăпа çĕмĕретес ĕçе организацилемелле.

4. Фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитетсен пахчасем тытакан рабочисемпе служащисене пахчасене акса хăвармалли вăрлăхсене вăхăтра мобилизацилеме кирли çинчен ăнлантарса памалла тата вĕсене çитмен вăрлăхсене çĕрĕç организацисенчен илме пулăшмалла. Рабочисемпе служащисен пахчисене лартма кирлĕ пахча-çимĕç калчисене тупса пама фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитетсене колхозсемпе, совхозсемпе, подсобнăй хуçалăхсемпе тата хула тавраринчи хуçалăхсемпе купăста, помидор, чĕкĕнтĕр тата ытти пахча-çимĕç калчисене çитĕнтерес тĕлĕшпе договорсем тума сĕнес.

5. ВЦСПС президиумĕ фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитетсене Лысенко академикăн меслечĕпе — апат-çимĕçе каякан çĕрулмин тăррисене касса лартмалли меслетпе анлăн усă курма сĕнет. Çакна тăвас майпа фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитетсен фабрикăсемпе заводсенчи столовăйсенче тата рабочисемпе служащисен килти хуçалăхĕсенче çĕрулми тăррисене касса хатĕрлес ĕçе организацилемелле.

6. Фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитетсене рабочисемпе служащисене пахча участокĕсене удобрени парса çемçетмешкĕн кăмакари кĕле тата тислĕке пухма кирли çинчен ăнлантарса пама хушас.

7. Профсоюзсен центрти, облаçсенчи комитечĕсен тата фабрикăсемпе заводсенчи комитетсен пахча-çимĕç лартса тăвас ĕçе вăйлатасси çинчен рабочисемпе служащисем хушшинче калаçусемпе докладсем ирттерме агрономсене, пахча-çимĕç тăвас тĕлĕшпе нумай çул ĕçленĕ практиксене анлăн явăçтармалла.

8. Пахча-çимĕç тăвас ĕçе йĕркелес тата рабочисемпе служащисене куллен практикăллă пулăшу парса пырас ĕçсене лайăхрах организацилес шутпа фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитетсем çумĕнче пахча-çимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем организацилес. Çав комиссисен составне пахча-çимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе опыт пур рабочисемпе служащисенчен суйлама кирлĕ тесе шутлас. Çав комиссисен фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитетсем ертсе пынипе ĕçлемелле.

9. ВЦСПС президиумĕ профсоюзсен центрти тата облаçсенчи мĕнпур комитечĕсене пахча-çимĕç лартса тăвассине организацилес ĕçре, уйрăмăнах çĕр участокĕсем уйăрса парас, вăрлăхсем тупас, кирлĕ инвентарьсем парса пулăшас ĕçре фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитетсене активлăрах пулăшма кирли çинчен асăрхаттарать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противник хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла кусна тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Мартăн 7-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 29 самолет мар, 36 самолет пĕтерсе тăкнă.

Мартăн 8-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсем çинче противникăнне 39 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 10 самолет пĕтнĕ.

Мартăн 9-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсенне 4 самолет персе антарнă.

* * *

Мартăн 8-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен 13 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 210 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 70 яхăн лавне, 3 бензозаправщикне, горючи тултарнă 3 автоцистернине, 31 орудине, зенитнăй пулеметсен 12 точкине, 49 минометне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен 8 складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, горючин 5 складне вут тĕртсе çунтарса янă, противникăн утлă çарĕн пĕр эскадронне тата унăн пехотине 5 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иртнĕ эрне хушшинче, мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 7-мĕшне çитиччен нимĕç авиацийĕн 385 самолет пĕтнĕ. Çав вăхăт хушшинчех пирĕн 65 самолет пĕтнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, малалла наступлени туса пырса, нимĕçсенне 2 танк, артиллерипе минометсен батарейине, танксене хирĕç пемелли 2 оруди, 6 станковăй тата ручной пулемет, 2 бронемашина пĕтерсе тăкнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 800 çын ытла вилсе пĕтнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр часть, противник вăйлăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, халăх пурăнакан Т. пункта йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 700 яхăн вилли выртса юлнă. Çапăçура старши сержант Гожекко уйрăмах палăрнă. Вăл нимĕç пулемечĕсен 2 расчетне пĕтерсе тăкнă та вĕсен пулемечĕсене хăй тытса илнĕ.

* * *

Разведчиксен группи, старши лейтенант Рябченко ертсе пынипе, тăшман çине кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăннă, нимĕçсенне 25 автомашина, 150 велосипед, 10 мотоцикл тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Орел партизанĕсен П. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ гитлеровецсен 23 салтакне, 2 офицерне вĕлернĕ, нимĕçсен паха çар грузĕ тиенĕ 2 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Партизансем питех те нумай трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен Иоганн Комад салтакĕ çумĕнче вăл Иозефа Кемберер патне ярса ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Унта çапла çырнă: «Пирĕн пĕрмаях выçăхма тата шăнса хытăркама лекет, çитменнине тата кашни минутăрах пуля пырса лекессине кĕтсе тăр. Ĕненĕр, эпир ĕнтĕ çителĕклĕ таранах асап куртăмăр. 280 çынран эпир 96 çын кăна тăрса юлтăмăр. Пĕриссем вилчĕç, теприсем аманчĕç».

* * *

Квалификациллĕ рабочисене фронта мобилизацилени Германири предприятисенчи ĕç тухăçлăхне ытларах та ытларах чакарса пырать. Герне хулинчи магистрат малтанлăха шута илнĕ данăйсем тăрăх çав районри металлурги завочĕсемпе шахтăсем тата кокс кăмакисем февраль уйăхĕнче, январь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 14 процент продукци сахалтарах туса кăларнă. Продукци пахалăхĕ питех те япăхланнă, тĕрлĕ инкек-синкексем ытларах та ытларах пулса пыраççĕ. Январь уйăхĕнче çынсем вилнипе вĕçленнĕ инкек-синкексем 196 хутчен пулнă, февраль уйăхĕнче вара çавăн пек инкек-синкексем 239 хутчен пулнă.

* * *

Новосибирск облаçĕнчи 7 колхоз нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсем валли лашасемпе ĕнесем 114 пуç уйăрса панă.

Мартăн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле совет войскисем фронтăн чылай участокĕсенче нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса наступлени туса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, противника хирĕç 2 кун хушши вăйлăн çапăçса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшпе пысăк çухатусем тӳснĕ. Пирĕн боецсем тăшманăнне 1 танк, 10 оруди, 13 миномет, 16 пулемет пĕтерсе тăкнă, 5 танк, 4 пулемет, 30 ещĕк мина, 3 ещĕк ручной граната, 25.000 патрон тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Противникăн вилсе тата аманса 2.000 çын ытла пĕтнĕ. Тепĕр участокра противникăн хирĕç тăмалли пункчĕшĕн пынă çапăçура пирĕн часть тăшманăнне пĕр танк пĕтерсе тăкнă, 1 самолет персе антарнă, 6 оруди, 2 миномет, 5 пулемет, 40 винтовка, 10 автомат тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 4 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă. Тăшман пысăк çухатусем тӳснĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем, вăйлă çапăçусем хыççăн, халăх пурăнакан виçĕ пункта йышăнса илнĕ. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче — танксене хирĕç пемелли 5 оруди, 2 миномет, 20 пулемет. Халăх пурăнакан пĕр пункт патне пымалли çулсем çинче кăна нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 100 яхăн вилли выртса юлнă.

* * *

Летчик-сержант Кузнецов пĕр çĕр хушшинче тăшманăн аэродромĕ çине 4 хутчен кайса тапăннă. Ирхине пирĕн разведчиксем Кузнецов юлташăн экипажĕ пырса тапăннине пула тăшманăн аэродромĕ çинче нимĕçсен 14 самолечĕ пĕтни çинчен пĕлтернĕ.

* * *

Крым фрончĕн участокĕсенчен пĕринче тăшман минăсем хурса тухнă уя тасатнă чухне кĕçĕн сержант Косаненкопа 4 красноармеец 1.200 çити мина тупса сиенсĕрлетнĕ. Вĕсемех минăсем хурса тухнă уй урлă 4 çĕртен çул уçнă.

* * *

Норвегин паллă патриочĕ Х. Ларсен ертсе пыракан партизансен отрячĕ Салмиярви районĕнче финсен боеприпассен складĕ çине пырса тапăннă. Çапăçу пынă вăхăтра партизансен отрячĕн командирĕ çине хурал тăракан салтаксенчен 8 çын сиксе ӳкнĕ. Белофинсем партизансен вожакне тыткăна илме шутланă. Питĕ вăйлă та çăмăл шăмшаклă Ларсен 3 салтака штыкпа чиксе вĕлернĕ, иккĕшне прикладпа çапса тата виççĕшне револьвертен персе вĕлернĕ. Партизансем складра хурал тăракан салтаксене пĕтерсе тăкнă та боеприпассене взрыв туса сирпĕнтерсе янă. Партизансен отрячĕ хăйĕн командирĕ ертсе пынипе хăйĕн базине пĕр çухатусăрах таврăннă.

* * *

Нимĕçсен 260-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 460-мĕш полкĕн 2-мĕш ротинчен тыткăна парăннă салтак Рудольф Петтингер çапла каласа панă: «Юлашки вăхăтченех мана çар предприятийĕнчи рабочи тесе çар службинчен отсрочка парса пынă, анчах та пирĕн çарăн Хĕвелтухăç фронтĕнче питĕ пысăк çухатусем пулнă пирки мана 1942 çулти январĕн 23-мĕшĕнче çара илчĕç те Российăна ăсатрĕç. Эпĕ тата ытти 18 салтак Юхнов патĕнче çапăçнă 460-мĕш полка лекрĕмĕр. Тепĕр виçĕ кунтан манпа пĕрле килнĕ 18 çынтан эпĕ кăна суранланмасăр тăрса юлтăм. Ыттисем пурте вилчĕç е аманчĕç. Вырăссем кăнтăрла та çĕрле те персе тăраççĕ. Нумаях пулмасть вырăссем вăйлăн пенĕ пирки пирĕн сехечĕ-сехечĕпе юр ăшĕнче выртмалла пулчĕ. Эпир пуççене çĕклеме хăтлансанах пире пулеметран çулаççĕ».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Карл Беме нумаях та пулмасть Лина Вильхельм патне çакăн пек çырнă: «Çурçул ĕнтĕ эпир вăрçăра, анчах та каç пулса тĕттĕмленсен мана яланах питĕ хăрушă пулать. Пур çĕрте те, вăрмансенче те, ялсенче те, партизансем питĕ нумай. Вĕсем пирĕн çине тапăнаççĕ».

* * *

Сталино облаçĕнчи Звонково ялĕнчи колхозниксем гитлерла бандитсен тискер преступленийĕсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: нимĕçсем Звонково ялĕнче пулнă вăхăтра 11 колхозника вĕлернĕ, вĕсем хушшинче çитĕнсе çитмен çамрăксем 8 çын пулнă. 40

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровӗнчен

Мартӑн 10-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӗвӗн вӗҫӗ

султи Иван Константинович Овсянникова вӗлернӗ. 45 ҫулти Никита Филимонович Максименкӑна тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗ. Унӑн питне кассасурса пӗтернӗ, куҫӗсене чиксе шӑтарнӑ, пуҫ шӑммине ватнӑ, аллисемпе урисене ӑарса лартнӑ. 18 ҫулти Григорий Переӗчноя прикладпа хӗнесе пӗтернӗ, аллисемпе урисене хуҫнӑ, унтан персе вӗлернӗ. Прикладпа ҫапса 16 ҫулти Иван Васищева, 14 ҫулти Степан Васищева вӗлернӗ, 17 ҫулти Андрей Лабунькӑна, 16 ҫулти Иван Олейникова, 16 ҫулти Виктор Иваненкӑна, 20 ҫулти Николай Иваненкӑна, 16 ҫулти Михаил Максименкӑна персе вӗлернӗ. Гитлерла юнӗҫенсем хресченсен пӗтӗм япат-ҫимӗҫӗсемпе килти япалисене, тумтирӗсене, выльӑх-чӗрлӗхӗсемпе кайӑк-кӗшӗкӗсене илсе тухса кайнӑ. Вӗсем ялтан тухса кайнӑ чухне 36 ҫурта, лашасен 4 витине ҫунтарса янӑ, колхоз правленин ҫуртне, колхоз лабораторине, клуба, 2 шкула, ялсовет ҫуртне, магазина, больницӑна, колхозӑн кладовойне, 13 амбара, армана взрыв туса сирпӗнтернӗ тата 42 колхознике хӑйсемпе пӗрле хӑваласа кайнӑ.

Снайпер

Кашни ҫынах снайпер-истребитель пулса ҫуралмасть ӗнтӗ, кӑна пурте пӗлеҫҫӗ, анчах Хӗрлӗ Ҫарӑн кашни боецех снайпер-истребитель пулма пултарать. Нумаях пулмасть-ха Иван Веркеев герой пуласса никам та шутламан, ак халь вӑл—пӗтӗм ҫар умӗнче чапа тухрӗ.

Пӗррехинче пирӗн боецсем юханшывӑн кӑнтӑр енчи ҫыранӗнче окопсем чавнӑ. Веркеев та унтах пулнӑ ӗнтӗ. Сасартӑк вӑл юханшывӑн тепӗр ҫыранӗнче финн салтакӗ темӗскер мӗшӗлтетсе тӑнине асӑрханӑ (лешӗ те окоп чавнӑ пулас).

— Ирӗк памастӑр-и, эп ӑна персе ӳкерем,— тенӗ Веркеев Кочкарев сержанта.

— Лектерейӗмӗн,—тенӗ сержант,—ытла шӗҫетре вӗт.

Веркеев винтовкине тӗлленӗ те малтанхи пульӑпах фашиста ҫӗре персе антарнӑ. Часах тепӗр финн курӑннӑ. Веркеев ӑна та пӗрре персех тирпейленӗ. Виҫҫӗмӗшӗ курӑннӑ. Вӑл та ҫаплах пӗтнӗ.

Ҫак фашистсенчен пуҫланӑ та ӗнтӗ Веркеев хӑйӗн шут йӗркине. Вӑл снайпер-истребитель пулса кулленех «сунара» ҫӳреме тытӑннӑ. Малтанах вӑл Кочкарев сержантпа ҫӳренӗ, унтан хӑйӗн юлташӗпе П. Старцевпа пӗрле йӗрлеме тытӑннӑ тӑшмансене. Пӗри вӗсенчен черетпе персе ларнӑ, тепри, хуралта тӑнӑ е сӑнанӑ. Ҫапла вӗсем куллен-кунах хӑйсен шутне ӳстерсе пынӑ. Иккӗшех финн салтакӗсене пӗр рота ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Анчах кӳ сахал пек туйӑннӑ вӗсене. Ӑнӑҫусӑр кун пулсан, иккӗшӗ те хӑйсене ниҫталла мар туйса ҫӳренӗ.

— Ун вырӑнне тепӗр кун ирттерех тӑратӑн та, тӳрех белофиннсем ытларах яваӑнма пултаракан вырӑна кайса тӑратӑн,—тет Веркеев.—Енерхи шута паян тултарас килет. Эпӗ темиҫе кун чирлесе выртрӑм та, Старцевран кая тӑрса юлмалла пултӗ.

Тӑшманӑн огневой точки патне ӑҫтан тата мӗнле пымаллине пӗлес тесе, Веркеев пӗр талӑка яхӑн хыр тӑррине ларнӑ. Белофиннсен пулеметчикӗсем хӑҫан улшӑннине вӑл питӗ те тӗплӗн пӗлсе аннӑ. Вара виҫӗ кун хушшинче виҫӗ пулеметчикне те тирпейлесе хунӑ.

Г. ФИШ.

(«Известия»).

Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен канашлӑвӗнчен

КАНАШ, (Телефонпа). Мартӑн 9-мӗшӗнче ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен канашлӑвӗ пулчӗ. Райисполком председателӗ Н. Константинов юлташ иртнӗ ҫулти ялхуҫалӑх ӗҫӗсемпе ҫитес ҫуракине хатӗрленесси ҫинчен доклад турӗ.

Иртнӗ ҫулта Канаш районӗнчи колхозсем гектартан тӗштырӑ 100 пӑтран кая мар илес тесе ӗҫленӗ, ҫураки планне 106 процент тултарнӑ. Ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттернӗ тата агротехника правилисене лайӑх пурнӑҫа кӗртсе пынӑ колхозсем иртнӗ ҫулта чӑн та пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗҫ. Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз иртнӗ ҫулта уйрӑмӑнах кӑтартуллӑ ӗҫлерӗ. Ҫак колхоз пӗлтӗрхи ҫул 765 тонна тислӗк, 93 центнер кӗл, 13 тонна тӗрлӗ минераллӑ удобренисем тӑкса ҫӗре ҫемҫетнӗ, ҫуракине те кӗске вӑхӑтра тунӑ. Ҫапла майпа колхоз тухӑҫлӑ тырпул пухса илчӗ. Тухӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн ҫак колхозра 65 ҫынна ӗҫкунӗ ҫумне хушса тӳленӗ.

Иртнӗ ҫулта лайӑх ӗҫленӗ колхозсем кӑҫалхи ҫуракине те аван хатӗрленеҫҫӗ. Чапаев, Куйбышев ячӗсемпе тӑракан т. ыт. колхозсем те ялхуҫалӑхӗнчи малта пыракансен канашлӑвне ҫуракине, пӗтӗмӗшпе илсен, хатӗрленсе ҫитнине кӗтсе илчӗҫ.

Канашлура колхозсем ҫуракине мӗнле хатӗрленни ҫинчен 15 ҫын тухса каларӗҫ. Вӗсем чылай колхозсем районра ҫуракине ҫителӗксӗр хатӗрленнине палӑртрӗҫ, хӑйсен ӗҫӗсене тишкӗрсе тухрӗҫ.

Районӗпе паянхи кун тӗлне кӑҫал акса хӑварма кирлӗ вӑрлӑхсене 65 процент ҫеҫ сортланӑ. Уйрӑмӑнах ку тӗлӗшпе «Красная звезда», «Коминтерн», «Соревнование», Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем начар ӗҫлеҫҫӗ. Уя тислӗк кӑларас, кӗл пухас плансене те ҫурри те тултарман, минераллӑ удобренисене те районӗпе 165 центнер ҫеҫ кӳрсе килнӗ. «Искра», «Самолет», Тельман ячӗпе тӑракан колхозсенче ялхуҫалӑх машинисене юсамаҫҫӗ.

Канашлура тухса калакансем уйрӑмах МТС пӗлтӗр те кӑҫал та начар ӗҫленине палӑртрӗҫ. МТС хӑйӗн иртнӗ ҫулти планне 85 процент тултарнӑ, кӑҫал та вӑл ҫуракине япӑх хатӗрленет. Унӑн халӗ татах 9 трактор, тӗрлӗ ялхуҫалӑх машинисемпе комбайнсене юсамалла.

Канашлу Шӑхасан районне ӑмӑртӑва чӗнчӗ.

Т. ИВАНОВ.

Канашлу паха кӑтартусем парса хӑварчӗ

ШӐХАСАН. (Телефонпа). Атнашри Киров ячӗпе тӑракан колхозӑн клубӗнче ҫак кунсенче ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Иртнӗ ҫулти ялхуҫалӑх ӗҫӗсемпе кӑҫалхи ҫуракине хатӗрленесси ҫинчен парти райкомӗн секретарӗ Г. Захаров юлташ доклад туса пачӗ. Докладчик Шӑхасан районӗнчи колхозсем иртнӗ ҫулта тунӑ паха ӗҫсем ҫинчен каларӗ, ҫитменлӗхсене тишкерсе, кӑҫал тумалли ӗҫсене палӑртса хӑварчӗ.

Иртнӗ ҫулта районри колхозсем гектартан вунӑшар центнер тырӑ илчӗҫ. Уйрӑм колхозсем нихҫанхи пек мар пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗҫ. Сӑмахран, Ворошилов тата Калинин ячӗпе тӑракан колхозсем кашни гектартан 17-шер центнер илчӗҫ, уйрӑм бригадӑсем — Калинин ячӗпе тӑракан колхозри Васильев бригади гектартан кӗрӗш 18,8 центнер, пӑри 20 центнер, сӗлӗ 19 центнер туса илме пултарнӑ. Ҫавӑншӑн ун бригадине 42 центнер тырӑ хушса тӳленӗ. «Прожектор» колхозра Иванов пахчаҫӑ гектартан 400 центнер хӗрлӗ кӑшман, 160 центнер помидор, 120 центнер хӑяр туса илнӗ.

Ҫакнашкал тӗслӗхсемпе пӗрлех, районра тухӑҫсӑр тырпул туса илнӗ колхозсем те ҫук мар. «Красный луч», «Оборона», «Молния» колхозсем пӗлтӗр гектартан вӑтам шутпа пурӗ те 6—8-шар центнер ҫеҫ тырӑ туса илнӗ. Ҫакнашкал тухӑҫсӑр тырпул туса илни колхозсем иртнӗ ҫулта ҫуракине хатӗрленсе ҫитменнинчен килнӗ.

Канашлура МТС ӗҫне те хытӑ тишкерчӗҫ, вӑл иртнӗ ҫулта ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртса хӑварчӗҫ. Трактор ӗҫӗсен планне МТС пӗлтӗр пурӗ те 86,6 процент ҫеҫ тултарнӑ, кашни комбайнпа 268 гектар тырӑ вырас вырӑнне 134 гектар ҫеҫ вырнӑ. Уйрӑм комбайнерсем, сӑмахран, Сидоровпа Григорьев комбайнерсем, 3—15 гектар ҫеҫ вырнӑ.

Канашлу активлӑ иртрӗ. Иртнӗ ҫулта начар ӗҫленӗ колхозсемпе МТС-ӑн ӗҫне хытӑ тишкерчӗ, паха сӗнӳсем парса хӑварчӗ тата канашлу, хӑй ҫине татӑклӑ обязательствӑсем илсе, мартӑн 15-мӗш тӗлне вӑрлӑхсене пур культурӑсем енӗпе те сортласа пӗтерме, пур ялхуҫалӑх машинисене те юсаса ҫитерме пулчӗ.

Канашлӑва пухӑннӑ колхозниксем кӑҫалхи ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттерме Канаш районне ӑмӑртӑва чӗнчӗҫ.

В. НИКАНОРОВ

Колхозӑн ӗҫ планне сӳтсе-яврӗҫ

ҪӖРПУ. (Телефонпа). Старакри «Чуваш ЦИК» колхоз паянхи кун тӗлне тӗштырӑсен вӑрлӑхӗсене сортласа пӗтернӗ, уя 1500 лав тислӗк кӑларчӗ, 50 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухрӗ.

Ҫак иртнӗ кунсенче колхоз кӑҫалхи ӗҫсен планне туса хатӗрлерӗ. Ҫав плана тӑрӑх, колхозӑн кӑҫал 60 гектар ҫурхи тулӑ, 87 гектар сӗлӗ, 30 гектар пӑрҫа т. ыт. культурӑсем те акса хӑвармалла.

Колхозра пурӗ 5 бригада. Ҫав бригадӑсенче 275 ҫын, 44 лаша, 34 ялхуҫалӑх машини шутланать. Ҫак вӑйсене колхоз бригадӑсем ҫумне ҫирӗплетрӗ. Кӑҫалхи ҫуракине 10 кун хушшинче ирттерме палӑртрӗ.

Колхозӑн ӗҫ планне мартӑн 8-мӗшӗнче колхозниксен пухӑвӗнче сӳтсе-яврӗҫ. Колхозниксем ҫуракинче хӑйсене ҫирӗплетсе панӑ ӗҫсене вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа туса ирттерме пулчӗҫ, хӑйсем пек ӗҫлеме «Кульмет» колхозри колхозниксене ӑмӑртӑва чӗнчӗҫ.

Ҫак кунсенче вӗсем ӑмӑрту договорне те тӑваҫҫӗ.

Г. ПЕТРОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Кавказ фрончӗ). Кубаньре вата казаксем ылханлӑ фашистсене ҫӗмӗрме пинӗ-пинӗпе хӑйсен ирӗкӗпе казаксен чаҫӗсене кӗнӗ. Ӳкерчӗк ҫинче (сулахайран сылтӑмалла): Кубаньри казаксем — С. Я. Шалимов—Ладога станицинчен, Г. Т. Приходько — Братски хутортан тата М. Г. Свиридов—Ладога станицинчен (Краснодар крайӗ). Вӗсем пурте 1-мӗш Утлӑ Ҫарта пулнӑ боецсем, 1918 ҫулта Ростов патӗнче нимӗҫ оккупанчӗсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ операцисене хутшӑннӑ.

М. РЕДКИН фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Молотов юлташӑн нотисене уйрӑм кӗнеке туса кӑларнӑ

ЛОНДОН, мартӑн 8-мӗш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, нимӗҫсен тискер кайӑкла ӗҫӗсем ҫинчен Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ Совет Союзӗ дипломатиллӗ ҫыхӑнусем тытакан ҫӗршывсен правительствисем патне янӑ нотӑсене Англи правительстви ятарласа уйрӑм кӗнеке туса кӑларнӑ. Ҫав кӗнекене Молотов юлташ «Советӑн тыткӑна лекнӗ ҫыннисем тӗлӗшпе Германи влаҫӗсем тӗлӗнмелле тискер ӗҫсем туни ҫинчен» 1941 ҫулти ноябрӗн 25-мӗшӗнче панӑ нотӑна тата «Германи влаҫӗсем хӑйсем тытса илнӗ совет территорийӗсем ҫинче пур ҫӗрте те халӑха ҫаратса юхӑнтарни тата тискер кайӑкла ҫавтери хӑрушӑ ӗҫсем туни ҫинчен» 1942 ҫулти январӗн 6-мӗшӗнче панӑ нотӑна кӗртнӗ.

Ҫав нотӑсене кӑларни ҫинчен пӗлтернӗ майпа Англин информаци министерстви ҫапла каланӑ: нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем мирлӗ халӑха тискер кайӑкла асаплантарни ҫинчен тата вӗсем тӑвакан хӑрушӑ преступленисем ҫинчен ҫав нотӑсенче, никам сирсе ярайми фактсем илсе, яр-уҫҫӑн кӑтартса панӑ. Вырӑс халӑхӗн вӗҫӗ-хӗррисӗр тарӑхӑвне ҫӑмӑллӑнах ӑнланса илме пулать, — тенӗ информаци министерствин пӗлтерӗвӗнче. Совет правительстви ҫав преступленисемшӗн мӗнпур ответлӑха гитлерла Германин правительстви ҫине хурать, тесе кӑтартса панӑ юлашкинчен ҫав асӑннӑ пӗлтерӳре.

Иран граждӑнӗсем Совет Союзӗпе пӗр шухӑшлӑ пулни

ТЕГЕРАН, мартӑн 8-мӗш. (ТАСС). Совет Союзӗн Тегеранри консульстввине Иран граждӑнӗсенчен Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли нумай парнесем тата ҫырусем пырса тӑраҫҫӗ. Ҫав ҫырусем Хӗрлӗ Ҫар гитлеровецсен урнӑ йытӑ тӗвӗсене хирӗҫ кӗрешнине Иран ҫыннисем чӗререн кӑмӑлланине палӑртаҫҫӗ. Консульствӑна ҫакӑн пек парнесемпе ҫырусем уйрӑмӑнах Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ кунсенче нумай пырса пуҫланӑ.

Тегеран ҫыннисенчен пӗри Хӗрлӗ Ҫар ячӗпе янӑ ҫырӑвӗнче ҫапла калать: «Сире инҫетри Иранран саламлатӑп. Сирӗн ҫинчен тата Сирӗн паттӑр ӗҫсем ҫинчен вуласан, Совет Союзӗнче чун-хал тӗлӗшпе богатырьсем пурӑннине хавасланса ӗнентӗп. Ҫавӑн пек ӑмӑрткайӑксене геройлӗ ҫулпуҫ Сталин ертсе пынӑ чухне Совет Союзӗ темӗнле тӑшман пырса ҫапнине те тӳссе ирттерме пултарать. Хӑмӑр чума чирне саракан ылханлӑ тӑшмана тӗппипе ҫапса аркатичченех Сире ӑраскал сыхласа тӑтӑр. Сире парнесесе—портсигар, кӗмӗл мундштук тата сигаретӑсем яратӑп. Тӑшмана пуҫӗпе аркатса тӑкиччченех ҫапӑр».

Пӗр Иран юристӗ ҫапла ҫырать: «Совет Союзне хам чӗререн кӑмӑлланине палӑртас тесе тата союзлӑ пурӑнмалли договор тунӑшӑн саванние кӑтартас тесе пин риал укҫа паратӑп,—ӑна манран йышӑнса ССР Союзӗн оборони фондне парӑр. Сывӑ пултӑр СССР тата унӑн аслӑ Хӗрлӗ Ҫарӗ! Хаклӑ боец, Сирӗн пата сехет тата сигарӑсем ярса паратӑп, ҫакӑнпа пӗрлех Мускав хӗрне, Таньяна, вӗлерекен ылханлӑ ҫӗлен-калтасене тӗппипех ҫапса аркатмашкӑн Сире сывлӑхлӑ та вӑйлӑ пулма ыра сунатӑп. Ҫапӑҫура Сире ӑраскал сыхлатӑр. Сирӗн ӗҫ—тӗрӗслӗх ӗҫӗ, ҫӗнтерӳ Сирӗн енче пулмалла. Сирӗн чаплӑ ӗҫӗрсем ҫинчен вуласа, эсир тӑвакан ҫӗнтерӳсем ҫине хавасланӑн пӑхса тӑратпӑр».

Ҫакнашкал парнесемпе ҫырусем татти-сыпписӗр пырса тӑраҫҫӗ.

Нимӗҫсем вӑхӑтлӑха тытса илнӗ совет районӗсенче пурӑнакан халӑх гитлеровецсене кураймасть

СТОКГОЛЬМ, мартӑн 8-мӗш. (ТАСС). Гитлеровецсен хаҫачӗсен хӑшпӗр пӗлтерӗвӗсенчен нимӗҫсем тытса илнӗ совет районӗсенче халӑх гитлеровецсене мӗнтери хирӗҫ тӑни уҫҫӑнах сисӗнет. «Дейче цейтунг ин Остланд» хаҫат статья пичетлесе кӑларнӑ, унта нимӗҫсем Белоруссире пысӑк йывӑрлӑхсемпе тӗл пулни ҫинчен ӳпкелешсе ҫырнӑ. Хаҫат ҫапла ҫырать: тытса илнӗ Белоруссире ӗҫлекен нимӗҫ чиновникӗсен нумаях пулмасть кӗна пухӑннӑ съездӗнче чиновниксем: халӑх хирӗҫ тӑнипе «пӗр мероприятие те пурнӑҫлама май ҫук», тесе пӗлтернӗ. Белорусси ҫамрӑкӗсем пӗтӗмпех советсен шухӑшне кӑмӑлне парӑннӑ. «Вӑл ҫамрӑксене урӑхлатма май ҫук»,—тесе тухса каланӑ ҫав съездра нимӗҫ чиновникӗ Кубе.

Ҫав хаҫатах оккупантсем Белоруссире пурӑнакан халӑха пӗтӗмпех чухӑнлантарса ҫитерни ҫинчен палӑртакан фактсене те пичетлесе кӑларнӑ. Хаҫат пытараймасть,—Германи ҫарӗ валли япаласем «пухнӑ» чухне ҫынсен «юлашки япалисене пама тивнӗ» тесе пӗлтерет вӑл. Кунсӑр пуҫне тата, «Дейче цейтунг ин Остланд» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Минскра нимӗҫсен лазаречӗсем валли халӑхран кроватьсемпе тенкелсем, кухньӑри япаласем вӑйпах турта-турта илнӗ. Минскра пурӑнакан халӑх выҫӑ ларнине хаҫат пытараймасть.

Румыни правительстви студентсемпе шкул ачисене хирӗҫ ҫирӗп мерӑсем йышӑнни

АНКАРА, мартӑн 9-мӗш. (ТАСС). Болгарин «Новы вечер» хаҫачӗ Бухарестран илнӗ радио-пӗлтерӗве пичетлесе кӑларнӑ. Унта ҫапла каланӑ: Румынин министрӗсен совечӗ, Антонеску председатель пулса тӑнипе, Румыни ҫӗршывӗ тӳссе ирттерекен «историллӗ саманта ӑнланса илме кӑмӑл туман» студентсемпе шкул ачисене, вӑрттӑн организацисенче халӗ те членра тӑракансене, хирӗҫ чи ҫирӗп мерӑсем йышӑнмалла тесе решени йышӑннӑ. Ҫавӑн пек йӗркесӗрлӗхсем палӑрнӑ училищӗсен директорӗсене, — тенӗ малалла пӗлтерӳре, — вӗсене дисциплинӑна тытма пултарайман ҫынсем вырӑнне хурса, ӗҫрен кӑларса яраҫҫӗ. Черновицӑри филологи факультетне унта пысӑк пӑлханусем пулнӑ пирки татӑклӑнах хупса лартмалла тунӑ. Кунсӑр пуҫне, Румынин халиччен урӑх ҫӗршывсен аллинче пулнӑ территорийӗсенчен куҫса килнӗ ҫынсем пурӑнакан ҫуртсенче йӗркелӗх тытас тӗлӗшпе министрсен совечӗ шалти ӗҫсен министрне чи ҫирӗп мерӑсем йышӑнма хушнӑ.

Англи авиацийӗн ӗҫӗсем

ЛОНДОН, мартӑн 9-мӗш. (ТАСС). Англи авиацин министерстви кӑларнӑ коммюникере ҫапла каланӑ: мартӑн 9-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англин бомбардировщикӗсем Эссен хули ҫине тата Рур облаҫӗнчи промышленноҫлӑ ытти объектсем ҫине ӑнӑҫлӑн вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Кунсӑр пуҫне, Голландири аэродромсем ҫине тата Остендепе Гавр порчӗсенчи доксем ҫине вӗҫсе пырса бомбӑсем пӑрахнӑ. Истребительсен эскадрильисем противникӑн Голландири тата Ҫурҫӗр Францири аэродромӗсем ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ.

Нимӗҫсен корреспонденчӗсем йышӑнни

СТОКГОЛЬМ, мартӑн 8-мӗш. (ТАСС). Швецин «Дагенс нюхетер» хаҫачӗ умстатья пичетлесе кӑларнӑ, унта ҫапла каланӑ: Германин ҫар корреспонденчӗсем юлашки вӑхӑтра совет ҫарӗсен резервӗсемпе ҫар материалӗсем ҫавтери нумайӑшӗ пирки хӑйсем питех те тӗлӗнни ҫинчен уҫҫӑнах ҫыраҫҫӗ. Германишӗн пулсан, хальхи вӑхӑтра резервсен ыйтӑвӗ питех те ҫивӗч ыйту пулса тӑрать. Предприятисенчи нимӗҫ рабочийӗсене ютҫӗршывсенчен илсе килнӗ рабочисемпе улӑштарма тӑрӑшса, Германи ҫӗршывӗ халӗ ҫынсем тӗлӗшпе юлашки ресурссене мобилизацилет. Германи промышленноҫӗнче пуринчен ытларах ютҫӗршыв рабочийӗсем ӗҫлеҫҫӗ, ҫакӑ, паллах, ӗҫ тухӑҫлӑхне чакармасӑр иртсе кайма пултараймасть. Ҫав рабочисем нимӗҫсене пулӑшмашкӑн юн тӑкассине кӗтме йывӑр. Вӗсем ытларах нимӗҫсене хирӗҫ саботаж тума пӑхӗҫ.

Гитлеровецсем тылран фронта яракан ҫырусенчен хӑраҫҫӗ

СТОКГОЛЬМ, мартӑн 8-мӗш. (ТАСС). Паллӑ хыпарсем тӑрӑх, гитлерла влаҫсем Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнчи салтаксемпе вӗсен ҫемьисем хушшинчи почта ҫыхӑнӑвӗсене йӑлтах пӗтерсе лартнӑ. Ку ҫыхӑнӑва мӗн пирки пӗтерни ҫинчен «Остдейчер беобахтер» хаҫат сӳпӗлтетсе ҫапла ҫырнӑ: «Хамӑран фронта яракан ҫырусене пирӗн питех те асӑрханса ҫырмалла. Салтаксене хамӑрӑн тӗрлӗрен иккен-синкексем ҫинчен пӗлтерсен, хуйхӑллӑ хыпарсем ярсан, эпир вӗсен ҫапӑҫури паттӑрлӑхне хавшататпӑр»,—тенӗ.

Анчах та тылпа фронт хушшинчи почта ҫыхӑнӑвӗ пӗтнӗ пирки нимӗҫ халӑхӗпе салтакӗсем ҫавтери тарӑхаҫҫӗ. Гитлерла хаҫатсем ӳпкелешекен халӑха фронта ҫырусем ҫитерме йывӑр текен сӑлтавпа лӑплантарма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫав «Остдейчер беобахтер» хаҫатах ҫапла ҫырать: «Хӗвелтухӑҫне транспорт ҫӳретме йывӑр пирки ҫырусем питех те вӑрахӑн каяҫҫӗ, ҫапах та ҫакӑ кулянмалла фактпа килӗшмеллех пулать. Пирӗн фронт тылпа питех те начар ҫыхӑнса тӑрать; ӑна лайӑхлатма нумай вӑхӑт кирлӗ пулӗччӗ. Салтаксен тӑванӗсем ҫакӑн ҫинчен ӑнланмаллах ӗнтӗ, полевой почтӑн ӗҫӗсене йывӑрлатма юрамасть. Салтаксенчен нумайӗшӗсем полевой почта ӗҫлемест тесе ӳпкелешеҫҫӗ пулсан, — кун пек ӳпкелешӗве илтме питех те аван мар, анчах нимӗн тума та ҫук.

Берлин халӑхӗн шухӑш-кӑмӑлӗ начар

СТОКГОЛЬМ, мартӑн 8-мӗш. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаҫатӑн Берлинри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Берлинра пурӑнакан ҫынсен тарӑхӑвӗ ӳсе пынине нимӗнпе те пытарса тӑма ҫук. Нумаях пулмасть Фридрих II ҫинчен кӑларнӑ кинофильмӑн уйрӑм пайӗсем Берлин ҫыннисем ӳпкелешнине пусарма пӑрахаҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра вӑрҫӑ пирки пулса иртекен йывӑрлӑхсем, паллах, халӑх шухӑш-кӑмӑлне лайӑхлатма памаҫҫӗ. Продуктсем тата таварсем ҫитменни питех те хыттӑн сисӗнет. Чи кирлӗ таварсене те тупса илме ҫук. Сивӗ хӗл вӑхӑчӗ халӑха нумай йывӑрлӑхсем кӳнӗ. Фронтри ҫынсен пурнӑҫӗшӗн шикленни халӑхӑн шухӑшне пушшех те салхулантарать. Кашни утӑмрах ҫилӗллӗн харкашнине, ҫынсем шӑртланса ҫӳренине курма пулать, уйрӑмӑнах ҫакӑ вӑл автобуссем ҫинче, трамвайсенче тата магазинсенче сисӗнет. Ҫакӑн пирки нимӗҫ хаҫачӗсем те хытах шикленсе ҫыраҫҫӗ. Нумаях пулмасть «Локальанцейгер» хаҫат: «тылра йӗркеллӗ те лӑпкӑ пулни салтак аллинчи хӗҫпӑшал пекех пысӑк вырӑнта тӑмалла», тесе ҫырнӑ. «Дас Рейх» хаҫат тата: «тӳрккес те тарӑхуллӑ ҫын вӑл—вӑрҫӑ машини ӑшне хӑйӑр сапакан ҫын евӗрлех» тесе вӗрентет.

Фашистсем пӑшӑрханаҫҫӗ

ЖЕНЕВА, мартӑн 8-мӗш. (ТАСС). Кунта илнӗ сведенисем тӑрӑх, «Германири ялхуҫалӑх пӗрлешӗвӗн» информаци бюровӗ Германие ялхуҫалӑх продукчӗсем парса тӑрас ӗҫ малашне мӗнле пуласси ҫинчен пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав пӗлтерӳре, Германи халӑхӗ ССР Союзӗн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен продовольстви кӳрсе килесси ҫине шанма тивӗҫлӗ мар тата шанма та пултараймасть, тесе тӳрех каланӑ. Пӗлтерӳре малалла оккупациленӗ территорисенчи ялхуҫалӑх ресурсӗсем Германи ҫарне тӑрантарма кирлӗ пулаҫҫӗ тесе кӑтартса панӑ. Ҫав пӗлтерӳ ҫинчен ҫырса, Швейцарин «Дер таг» хаҫачӗ ҫапла каланӑ: Советӑн оккупациленӗ территорийӗсенче вӑрҫӑ ӗҫӗсем пынӑ пирки тата халӑх оккупантсене хирӗҫ тӑнӑ пирки унти ялхуҫалӑх продукчӗсемпе нимӗҫсен усӑ курма май пулмасть, — тенӗ.

Ливири вӑрҫӑ

ЛОНДОН, мартӑн 8-мӗш. (ТАСС). Англин Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнчи сывлӑш-ҫар вӑйӗсен командованийӗ кӑларнӑ коммюникере ҫапла каланӑ: мартӑн 6-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи авиацийӗ Бенгазипе Триполири объектсем ҫине ҫӗнӗрен вӗҫсе пырса бомбӑсем пӑрахнӑ. Противник авиацийӗ Мальта утравӗ ҫине вӗҫсе килсе бомбӑсем пӑрахнипе хӑшпӗр ишӗлӳсем пулнӑ, вырӑнти граждӑнла халӑх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай мар. Мартӑн 6-мӗшӗнче противникӑнне «Мессершмитт-109» йышши пӗр самолет персе антарнӑ.

ЛОНДОН, мартӑн 8-мӗш. (ТАСС). Мальта утравӗнчен илнӗ черетлӗ коммюникере ҫапла каланӑ: тӑшманӑн самолечӗсем Мальта ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ чухне мартӑн 6-мӗшӗнче противникӑнне «Мессершмитт-109» йышши 2 самолет персе антарнӑ, тепӗрне Англи истребителӗсем тата зенитлӑ артиллерирен персе сиенленӗ. Унсӑр пуҫне тата тепӗр «Юнкерс-88» самолета сиенленӗ. Англи авиацийӗн нимле ҫухату та пулман. Противник пӑрахнӑ бомбӑсем хӑшпӗр сиенсем тунӑ, вилнисемпе аманнисен шучӗ пысӑках мар.

Мальта утравӗ ҫинче

ЛОНДОН, мартӑн 9-мӗш. (ТАСС). Англин информаци министерстви ҫапла пӗлтерет: Мальтӑран илнӗ хыпарсем тӑрӑх, противникӑн авиацийӗ вӗҫсе пырса тапӑннипе пула февраль уйӑхӗнче граждӑнла халӑх хушшинчен 118 ҫын вилнӗ, 153 ҫын йывӑр аманнӑ тата 164 ҫын ҫӑмӑл аманнӑ. Мартӑн 8-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле противникӑн самолечӗсем 11 сехет хушши Мальта утравӗ тӗлӗнче е ун ҫывӑхӗнче вӗҫсе ҫӳренӗ. Зенитлӑ артиллери противникӑн самолечӗсем ҫине вӑйлӑн персе тӑнӑ. Утрав ҫинче пурӑнмалли хӑшпӗр ҫуртйӗрсем сиенленнӗ. Ҫынсем тӗлӗшпе жертвӑсем пулман.

ЛОНДОН, мартӑн 9-мӗш. (ТАСС). Мальта утравӗ ҫинчен илнӗ черетлӗ коммюникере ҫапла каланӑ: неприятелӗн авиацийӗ мартӑн 8-мӗшӗнче кунӗпех пысӑк активлӑх кӑтартнӑ. Противник бомбардировщикӗсен эскадрильисене Англин истребителӗсем кӗтсе илнӗ, ҫавӑн пекех неприятель ҫине зенитлӑ артиллерирен вӑйлӑн персе тӑнӑ. Противникӑн самолечӗсем бомбӑсем пӑрахса граждӑнла ҫуртйӗрсене, ҫавӑн пекех государствӑн ҫуртйӗрӗсене те, вырӑнӗ-вырӑнӗпе ишӗлтернӗ. Ҫынсем тӗлӗшпе жертвӑсем пысӑках мар. Неприятелӗн авиацийӗ утравпа порт ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ чухне зенитлӑ орудисенчен персе «Юнкерс-88» йышши 2 самолета сиенленӗ.

Египет премьерӗ тухса калани

ЛОНДОН, мартӑн 9-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пӗлтернӗ тӑрӑх, Египет премьер-министрӗ Нахас-паша радио тӑрӑх сӑмах тухса каланӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл: Египет правительствин тулашри политикин тӗп тӗллевӗ Англипе Египет хушшинчи союзлӑ договорӑн условийӗсене ырӑ кӑмӑллӑн пурнӑҫа кӗртсе пырасси пулса тӑрать, тенӗ. Ҫавӑн пекех Нахас-паша: ҫӗршывра социальнӑй улшӑнусем тӑвас ыйтусене те правительствӑпа парламент пӗрремӗш вырӑна хурса хакласҫӗ, тесе ҫирӗплетсе каланӑ.

Индипе Китай хушшинчи ҫыхӑну

ЛОНДОН, мартӑн 9-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Индин национальнӑй конгресӗн руководителӗ мартӑн 7-мӗшӗнче ҫапла каланӑ: Индипе Китай пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса ӗҫлемелле тӑвас тӗлӗшпе Чан Кай-ши Индие пырса кайнӑ май палӑртнӑ ӗҫсем пурнӑҫа кӗрсех пыраҫҫӗ, — тенӗ.

Ютҫӗршывсенче

● Германин Варшавӑри губернаторӗ 100 поляк-заложнике персе вӗлерни ҫинчен пӗлтернӗ. Нумаях пулмасть Варшавӑра паллӑмар ҫынсем нимӗҫсен икӗ полицейскине тапӑннӑ пулнӑ. Халӗ ҫавӑншӑн 100 поляк-заложнике пӗр айӑпсӑрах персе вӗлернӗ.

● Гитлерӑн Польшӑри влаҫӗсем шатраллӑ тифпа чирлекен поляксене пурне те вӗлерме хушнӑ.

● Нимӗҫсен суту-илӳ обществи поляксене тӗрлӗрен суту-илӳ тӑвакан 3.000 предприятие туртса илсе нимӗҫсене валеҫсе панӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Горьковскому межобластному отделению Всесоюзного треста „Дубитель"

срочно требуются на постоянную работу по заготовке-отгрузке ивового-елового корья и дубка в районах Чувашской, Марийской республик и Горьковской области работники в качестве:

1) заведующих районных заготпунктов,

2) межрайонных инспекторов-инструкторов.

со ставкой от 300 до 500 руб в месяц. Фактический расход переезда к месту работы оплачивается.

Заявления с краткой характеристикой о прежней работе высылать: пос. Вурнары, Чувашской АССР, Казанская ж. д., Вокзальная ул., дом № 3, Горьковскому отделению треста „Дубитель".

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн тата комсомол пурнӑҫ пайӗн — 6—85, издательство кӗнтерин — 6—23.

НХ 3908 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 200. Ф. 6. 58 64 п. л.